Check for updates

Ăслăлăх статйи

# Çыравçăн ама несĕллĕх курăмĕ е литературăн илемлĕх тĕнчи («хĕрарăм прози» ăнлав тавра шухăшлани)

DOI 10.31483/r-101084
УДК 82-1/-9

Check for updates

**Мышкина А.Ф.**
ЧР «Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕ» ХПВ БУ регион аталанăвĕ центрĕ,
Шупашкар хули, Раççей Федерацийĕ.
ORCID: https://orcid.org/0000-0001-8560-9146, e-mail: alb-myshkina@mail.ru

***Аннотаци:*** Паянхи чăваш литератури, ытти халăхсен сăмахлăхĕ пекех, нумай енлĕн аталанать. Çакна çыравçăсен хайлавĕсенче совет литературирнче пулман пулăмсем аталанни те çирĕплетет.

Çавăнпа та *тĕпчевĕн паянхи кун пĕлтерĕшлĕхĕ* «хĕрарăм прози» текен ăнлав чăваш литературинче йышăнакан вырăнĕпе пĕлтерĕшне палăртма кирлипе çыхăннă. Чăваш литературин илемлĕх тĕнчине чи малтанах халăх тĕнче курăмĕ, чăваш чĕлхин уйрăмлăхĕсем калăплаççĕ. Нумай чух вырăс тата тĕнче литературишĕн пĕлтерĕшлĕ пулăмсем чăваш литературишĕн пачах та ют. *Тĕпчевĕн тĕп тĕллевĕ* – литература хайлавĕн илемлĕх тĕнчи тӳрĕнех авторăн ар уйрăмлăхĕпе çыхăнманнине кăтартса парасси. *Тĕпчев материалĕ* статьяра чăваш литературин хĕрарăм çыравçисен (Ю. Силэм, У. Элмен, Р. Прокопьева) проза хайлавĕсем пулса тăнă.

Тĕпчев ирттернĕ хыççăн çакнашкал *пĕтĕмлетӳ* тунă: чăваш литературиче «хĕрарăм прози» текен пулăм пур тесе иккĕленӳсĕр калама çук, мĕншĕн тесен унăн паллисем çыравçăсен психологиллĕ, философиллĕ тата лирикăллă стильпе çырнă хайлавĕсен уйрăмлăхĕсем пулса тăраççĕ.

***Тĕп сăмахсем:*** хĕрарăм прози, хĕрарăм тĕнче курăмĕ, хĕрарăм сăнарĕ, жанр, çыравçă стилĕ.

***Цитатăлама:*** Мышкина А.Ф. Çыравçăн ама несĕллĕх курăмĕ е литературăн илемлĕх тĕнчи («хĕрарăм прози» ăнлав тавра шухăшлани) // Вĕренӳ аталанăвĕ. – 2022. – Т. 5, №1. – С. 10-14. DOI 10.31483/r-101084.

Научная статья

# Женское мировоззрение писателя или эстетический мир литературы (размышления о термине «женская проза»)

**Мышкина А.Ф.**
Центр регионального развития БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования»,
Чебоксары, Российская Федерация.
ORCID: https://orcid.org/0000-0001-8560-9146, e-mail: alb-myshkina@mail.ru

***Резюме:*** Современная чувашская литература, как и другие национальные литературы, развивается разносторонне. Это наглядно показывают те произведения, в которых формируются новые явления ранее чуждые литературе советского периода.

*Актуальность* статьи связана с необходимостью определения места и роли понятия «женская проза» в чувашском художественном творчестве. Художественный мир чувашской литературы в первую очередь основывается на мировоззрении народа и своеобразии чувашского языка. Поэтому очень часто типичные явления русской и мировой литературы для чувашской литературы становятся не значительными. В связи с этим целью исследования стало представление аргументов в пользу утверждения, что эстетический мир произведения не связан напрямую с половой принадлежностью автора. Предметом исследования в данной статье выступают прозаические произведения чувашских писателей-женщин (Ю. Силэм, У. Эльмен, Р. Прокопьева).

В ходе исследования были получены следующие *результаты:* мировоззрение писателя включает в себя множество составляющих, наиболее значимыми из них становятся пол и национальность автора; понятие «женская проза» не актуально для чувашской литературы, так как оно проявляется лишь в рамках отдельных произведений и связано в основном с философским, психологическим и лирическим стилем писателя

***Ключевые слова:*** женская проза, женское мировоззрение, женский образ, жанр, стиль писателя.

***Для цитирования:*** Мышкина А.Ф. Женское мировоззрение писателя или эстетический мир литературы (размышления о термине «женская проза») // Развитие образования. – 2022. – Т. 5, №1. – С. 10-14. DOI:10.31483/r-101084.

Research Article

# Women's Worldview of the Writer or the Aesthetic World of Literature (Reflections on the Term "Women's Prose")

**Albina F. Myshkina**
Centre for Regional Development BI of FVE "Chuvash Republican Institute of Education of the Ministry of Education of Chuvashia",
Cheboksary, Russian Federation.
ORCID: https://orcid.org/0000-0001-8560-9146, e-mail: alb-myshkina@mail.ru

***Abstract:*** Modern Chuvash literature, like other national literatures, is developing in many ways. This is clearly shown by those works in which new phenomena are formed that were previously alien to the literature of the Soviet period.

*The relevance of the article* is connected with the need to determine the place and role of the concept of "women's prose" in Chuvash artistic creativity. The artistic world of Chuvash literature is primarily based on the worldview of the people and the uniqueness of the Chuvash language. Therefore, very often typical phenomena of Russian and world literature for the Chuvash literature become insignificant. In this regard, the purpose of the study was to present arguments in favor of the


CC BY

statement that the aesthetic world of the work is not directly related to the author's gender. The subject of the research in this article is the prose works of Chuvash women writers (Yu. Silem, U. Elmen, R. Prokopieva).

In the course of the study, the following *results* were obtained: the writer's worldview includes many components, the most significant of them are the gender and nationality of the author; the concept of "women's prose" is not relevant for Chuvash literature, since it manifests itself only within the framework of individual works and is mainly associated with philosophical, psychological and lyrical the style of the writer.

***Keywords:*** women's prose, women's worldview, women's image, genre, style of a writer.

***For citation:*** Myshkina A.F. (2022). Women's Worldview of the Writer or the Aesthetic World of Literature (Reflections on the Term "Women's Prose"). *Razvitie obrazovaniya = Development of education, 5*(1), 10-14. (In Chuv.) DOI 10.31483/r-101084.

**Умĕн калани**

Паянхи чăваш литература пĕлĕвĕнче «хĕрарăм прози» текен ăнлав пирки çине-çинех сăмахла пуçларĕç [7; 8; 10; 12]. Çавна май çак ăнлав литературăра пултарулăхшăн мĕн таран пĕлтерĕшлĕ пулнипе пулманни çинчен те калаçу хускатас килет. Кунта чи малтанах «çыравçăн тĕнче курăмĕ» текен ăнлава пăхса тухни кирлĕ. Тĕпчевçĕсем çыравçă тĕнче курăмĕн икĕ енне палăртаççĕ. Сăмахран, вырăс тĕпчевçи Н.А. Бердяев çапла çырать: «Это его созерцание мира, его интуитивное проникновение во внутреннее существо мира. Это и есть то, что открывается творцу о мире, о жизни» [1, с. 10]. Çакнашкал курăм, паллах, кашни çыншăнах пĕлтерĕшлĕ. Г.Д. Гачев тĕпчевçĕ вара çыравçă тĕнче курăмне вăл хăш халăх çынни пулнипе çыхăнтарать. Çак уйрăмлăх уйрăм çынра национальноçне кура генетика шайĕнче йĕркеленнĕ тесе калать. Унран та анлăрах вăл çапла çырать: «Национальное как особый талант зрения, в силу которого человек (ученый, художник …) из данного народа склонен открывать одни аспекты в бытии и духе, а выходец из другой традиции – иные» [2, с. 5]. Апла пулсассăн – çыравçă тĕнче курăмĕнче вăл ар е хĕрарăм пулни мар, вăл хăш халăх çынни пулни малта тăрать.

Çавăнпа пĕрлех литературăра кăтартнă хĕрарăм сăнарĕн пысăк пĕлтерĕшне те шута илмесĕр тăма юрамасть, мĕншĕн тесен литературăра пĕр-пĕр уйрăм вăхăтра пурăннă çынсен кăмăл-сипет тасалăхне, татса паман ыйтусене нумай чухне хĕрарăм сăнарĕ урлă кăтартаççĕ. Хĕрарăм сăнарĕн пĕтĕм кăмăл-туйăм, ыратупа савăнăç тарăнăшне вара хĕрарăм çыравçăран ытларах никам та ăнланмасть ĕнтĕ. Кунта пирĕн çармăссен хĕрарăм тĕпчевçин Р.А. Кудрявцевăн шухăшне палăртас килет. Хĕрарăм сăнарĕпе хĕрарăм тĕнче курăмĕ пирки ученăй çапла çырать: «Оценка женским персонажем окружающего мира и саморефлексия составляют психологическую линию сюжета и придают драматическую глубину характерам персонажей и повествованию в целом. По женскому восприятию пространства можно судить о динамике гендерных и этногендерных ролей и стереотипов в обществе, а также об изменении алгоритма художественного их осмысления в марийской прозе конца XX века» [3, с. 91]. Çав вăхăтрах чăваш литература историйĕнче арçын çыравçăсем те (Ю. Скворцов, А. Артемьев, Хв. Акивер) нумай енлĕ те ĕнентерӳллĕ хĕрарăм сăнарĕсем калăпланине курма пулать. Апла пулсассăн, çĕкленĕ ыйтăва тĕрĕс ăнланас тесен хайлавсен тишкерĕвĕ кирлĕ.

**Тĕпчев**

Чăваш литературинче нумай хĕрарăм çыравçă пултарулăха XX ĕмĕр вĕçĕнче килнĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ хайсен хайлавĕсенче литературăшăн яланах пĕлтерĕшлĕ тата çивĕч ыйтусене çĕкленĕ. Çакнашкал ыйтусенчен пĕри ĕçкĕ инкекĕ пулса тăнă. Сăмахран, çакна Д. Гордеевăн «Каçма», «Çич çунатлă курак» повеçĕсенче асăрхама пулать. Халăхăн ĕçкĕ йăлине сивлени, унăн инкекне тарăннăн кăтартасси Ю. Силэм пултарулăхĕнче те вăйлă.

Акă çыравçăн «Иккĕн» кĕнекине кĕнĕ «Пумилкке» калавнех илер. Хайлавăн сюжечĕ питех те ансат: Клавти хăйĕн ĕçсе вилнĕ ашшĕне пытарать. Çакна кăтартнă май çыравçă ĕçкĕ серепине çакланнă çемьен пурнăçне, шалтан, çак çемьере çитĕннĕ ача куçĕпе тĕпчет. Клавти хăрушă инкекпе мĕнле кĕрешмеллине татса параймасть, анчах хайлавра кăтартнă сăнар тӳсекен ырату вулакана шухăша ямасăр та тăмасть: «Кăшкăрса йĕрсе ярĕччĕ – куççуль тухмарĕ. Ну, мĕн тумалла, чăнах та, мĕн тумалла? Çын чысне-хисепне амăшĕ йăлтах эрехпе ылмаштарнă пулсан мĕн тума пĕлмелле хĕрĕн? Тарăхнă енне, çилли килнĕ енне, кăкшăмри юлнă пек шăршлă шĕвеке те, флягăри пăракана та урама илсе тухса юр çине чашлаттарчĕ-ха Клавти, анчах та çакă амăшне ĕçме пăрахтараймасть вĕт-ха. Ашшĕне пытарнă кун та кӳпсе лартрĕ те» [11, 56 с.].

Шел, анчах çакă ĕçкĕ инкекĕн пĕр енĕ çеç иккен-ха. Унăн тата хăрушăрах, тискертерех енĕ те пур: «Клавти чаршав хыçне вирхĕнчĕ. Кунта унăн кĕçĕн йăмăкĕ Виркка, чирлĕ, мĕскĕн Виркка, выртать. Ашшĕпе амăшĕ ĕçкĕ хушшинче çуратнă Виркка, телейсĕр хĕр ача. Миша шăллĕнчен те ăраскалсăртарах чĕрĕ чун, нихăçан сывалайми чирлĕ çын» [11, 58 с.]. Çапла вара, Ю. Силэм калавĕнче шăпах ĕçкепе иртĕхни уйрăм çын пурнăçне те, пĕтĕм çемьен малашлăхне те, чи хăрушшине – амăш варĕнчи çуралман ачан пуласлăхне те аркатнине курма пулать.

Çакнашкал шухăш-туйăм Ю. Силэм калавĕшĕн çеç мар, маларах асăннă Д. Гордеев повеçĕсемшĕн те курăмлă. Апла пулсан çак тема çыравçăн ар уйрăмлăхĕпе çыхăнман. Ăна ытларах паянхи куншăн (халăх историйĕн уйрăм тапхăрĕшĕн) çивĕч ыйтупа çыхăнтармалла, мĕншĕн тесен çыравçă çĕр-шыв тата общество умне сиксе тухнă ку е вăл йывăрлăхпа инкек-синкеке, чăрмавсемпе кăмăл-сипет «чирĕсене» пурне те анлăн çĕклесе вулакан патне çитерме тăрăшать. Саманапа, вăхăтпа тан утать, пĕтĕм халăхшăн тата кашни уйрăм çыншăн пĕлтерĕшлĕ те çывăх ыйтусене хускатать. Шăпах çакна А. Казановăн «Кашкăр юрттиллĕ этем кĕрчĕ», С. Павловăн «Сĕлкĕш» повеçĕсенче курма пулать. Хĕрарăм çыравçăсем йышĕнче вара çак тĕлĕшрен Н. Ильинана («Даниил», «Шĕл кăвар», «Турăсăр тупнă телей» калавĕсем), Р. Прокопьевăна («Пĕр пин тенкĕ» калавĕ) палăртмалла. Паллах, асăннă çыравçăсенчен



CC BY

кашниех хайӗн уйрӑмлӑхӗпе палӑрса тӑрать, анчах ҫак уйрӑмлӑх ҫыравҫӑ хӗрарӑм е ар пулнипе мар, литературӑн илемлӗх тӗнчин саккунӗсемпе, ҫыравҫӑсен стиль уйрӑмлӑхӗпе тата вӗсен ӑсталӑхӗпе ҫыхӑннӑ.

Тӗплӗнрех Р. Прокопьевӑн «Пӗр пин тенкӗ» калавне тишкерсе пӑхар-ха. Каларӑмӑр ӗнтӗ, ку хайлав темӑпа шухӑш тӗлӗшӗнчен юлашки ҫирӗм-ҫирӗм пилӗк ҫул хушшинче пичетленсе тухнӑ нумай хайлавпа тӳр килет, анчах та кунта психологиллӗ тата философиллӗ туртӑм вӑйлӑ. Ҫавӑнпа та ҫыравҫӑ пысӑках мар калав шайӗнче паянхи ҫыннӑн кӑмӑл-сипечӗн мӗн пур тӗсне кӑтартма пултарнӑ.

Хайлавра кӑтартнӑ тӗп сӑнар Аля паянхи ӗҫлӗ тата питӗ йӑрӑ хӗрарӑмсенчен пӗри пулса тӑнӑ. Унӑн пӗтӗм шухӑшӗ хайӗн сӑн-пуҫӗпе ӗҫре ҫитӗнӳсем (карьера) тӑвасси тавра явӑнать. Апла пулсан та – пӗрремӗш юратӑвне ӑнсӑртран тӗл пулни Альӑра тем вӑхӑта тахҫанах маннӑ ӑшӑ туйӑма вӑратать. Шел, ку туйӑма тупӑшпа услам илес туртӑм хӑвӑрт сирсе ярать те мала тухать. Ҫавӑнпа та икӗ ӗҫрен пӗрне – чиркӗве кӗрсе вилнӗ Алик ячӗпе ҫурта лартассипне е ҫур сехетлӗхе айккине илсе хунӑ кӗрӗкрен пӗрне суйлама тивсен Алевтина Юрьевна кӗрӗк илсе тӑхӑнасси ҫинче чарӑнать.

Тӗп сӑнар умне тухса тӑнӑ йывӑр суйлава ҫыравҫӑ калавра ак ҫапла ҫырса парать: «Тӑрса юлчӗ Аля аллинчи пин тенкипе… Мӗн тумалла? Темиҫе самант маларах кӑна анчах ӑшӗнче мӗн чухлӗ ылханмарӗ-ши вӑл Алике ҫав чаплӑ кӗрӗке туянма шӑп та лӑп пин тенкӗ ҫитменнишӗн?! Халь ак... Алик хӑй панӑ пекех пулса тухать-ҫке капла. Ятарласа кӗрӗк туянма-и? Чим-ха, темӗнле Александр ятне асӑнмарӗҫ-и вӗсем? Александр атте пулӑшрӗ тесе. Тен, ун патне каймалла? Йӑлтах каласа памалла, Алике асӑнтармалла… Ах, кӗрӗкӗ питӗ чаплӑччӗ-ҫке! Хурса хӑварнӑранпа кӗҫех ҫур сехет ҫитет. Туянма укҫи ҫителӗклӗ ҫӗртех мӗн туса тӑратьха вара вӑл? Хӑвӑртрах лавккана ӗлкермелле – чиркӳ ниҫта та тармасть» [9, 31 с.].

Кунта ҫакна та палӑртмалла: хайлав сюжечӗн никӗсӗнче чӑн пурнӑҫ лару-тӑрӑвӗ выртать – паянхи хӗрарӑм ача-пӑча ҫуратса ҫемье ӑшшинче пурӑнасси патнелле мар, карьерӑпа власть патнелле туртӑнни, хӑйӗн чунӗ пирки мар, хаклӑ кӗпе-йӗмпе кӗрӗк илме ӗлкересси пирки пӑшӑрханни. Ҫавӑнпа пулас ӗнтӗ, ҫакнашкал йывӑр чун суйлавӗ умне калавра хӗрарӑм сӑнарне тӑратнӑ, мӗншӗн тесен шӑпах хӗрарӑм чӑвашсен йӑли-йӗркинче те, вырӑс культуринче те пулас ӑрусене кӑмӑл-сипет тӗлӗшӗнчен аталантарать. Ҫак шухӑша пусса каласа вара автор паянхи кулленхи пурнӑҫа пирӗншӗн пачах ют хӗвел анӑҫӗнче аталанакан феминизм шухӑшӗ сӑрхӑнса кӗнине кӑтартасшӑн пулас [6].

«Хӗрарӑм прози» ӑнлава тивӗҫтерекен литература жанрӗ паянхи кун «юрату романӗ» текен жанр пулса тӑнӑ пулӗ. Пирӗн шутпа, шӑпах ҫакнашкал хайлавсенче ҫыравҫӑсен хӗрарӑм курӑмӗ (хӗрарӑм тӗнче курӑмӗ) вӑйлӑ палӑрать. Кунашкал литературӑра тата малти вырӑна юрату теми тухать. Шухӑша ҫирӗплетме хайлавсене тишкерсе пӑхар-ха.

Юратура чи хаяр тӑшман вӑл – ялан ҫумра пулакан ҫывӑх хӗр тус. Ҫакнашкал сӑмах ҫӳрет халӑхра. Шӑпах ҫакна Элмен Улькки хайӗн «Ма инҫе-ши ҫӑлтӑрӑм?..» кӗнекинче витӗмлӗн кӑтартса парать. Ака кӗнекене кӗнӗ повесть сӑнарӗсем – Рита («Аня... Анечка... Аня») тата Тоня («Ӑш вӑркамӑш») – хайсене пӳрмен телее ӑмсанса самантлӑха шухӑша каймасӑр хӗр тусӗсен юратӑвне, тасалӑхне ултавпа сӗрӗмлетсе аркатаҫҫӗ. Хайлавсем сӑнарсен шӑпипе кӑна мар, сюжечӗпе те пӗр пек. Ҫакна Виктор Ивановичпа («Аня...Анечка...Аня») Саша («Ӑш вӑркамӑш») савнийӗсенчен уйрӑлса авланнин сӑлтавӗ ултав тата эрех пулни те ҫирӗплетет. Тӗлӗнмелле ӗҫ-пуҫ пулса иртет иккен пирӗн пурнӑҫра: паянхи каччӑсемпе ар ҫынсен пуҫне сӗрӗмлеме пӗр черкке эрех ҫеҫ кирлӗ иккен. Ара, шӑпах ҫапла майпа качча тухрӗҫ-ҫке Ритӑпа Тоня! Апла пулсассӑн эпир мӗншӗн ҫак сӑнарсене кӑна питлетпӗр-ха? Вӗсеннинчен Виктор Ивановичпа Сашӑн айӑпӗ те кая маррине темшӗн манатпӑр.

Ҫак кӗнекене кӗртнӗ тепӗр повеҫе Элмен Улькки «Саншӑн чунӑм та шел мар» тесе ят панӑ. Кунта автор нумай чухне ар ҫынпа хӗрарӑм пӗр-пӗрне ӑнланайманни инкек патне илсе ҫитерни ҫинчен сӑмах ҫӗклет. Повеҫӗн тӗп сӑнарӗ Нина айккинчен кӳршӗ-аршӑ, тус-юлташ кусӗпе пӑхсан кӗмӗлпе ахах айӗнче ҫеҫ пурӑннӑ пек курӑнать. «Пилӗк ҫул хушшинче авӑ ҫемйине тӑватӑ пӳлӗмлӗ хваттер илсе пачӗ. Ҫӗнӗ сӗтел-пукан туянчӗ. Нинӑпа ачисем те пукане пек ҫӳреҫҫӗ» [13, 163 с.] – вулатпӑр кун пирки кӗнекере, анчах ҫак пуянлӑх кирлӗ-и-ха ӑна? «Чӗрре кӗрес темерӗ Нина юлташӗсемпе. Вӗсем ӑна ӑнланмассине туйрӗ. Выҫӑ ҫын туттине ӑнланмӗ, тутти – выҫҫине тенӗ ваттисем. Тата вӗсем тӗрӗссине те ӑнланчӗ вӑл. Выҫлӑх мӗнне хӑй те аван тӳссе курнӑ. Укҫасӑр ларни те сахал пулман, анчах ун пуҫӗнче нихӑҫан та пуяс ӗмӗт пулман. Чун-чӗрепе ҫывӑх мар икӗ ҫынна нимӗнле пуянлӑх та телей кӳмӗ. Телей вӑл пуянлӑх мар, чун-чӗре хаваслӑхӗ, ӑш вӑркаманни пулнине епле каласа ӑнлантарӑн вӗсене? Миша илсе тултарнӑ ниме тӑман хаклӑ япаласене парса упӑшкин юратӑвне, ӑшӑ кӑмӑлне тавӑрӗччӗ Нина, анчах мӗн пур калаҫӑвне укҫа ҫине те, хӗрарӑмсем ҫине куҫаракан Миша чӗри тахҫаннах ӗнтӗ тимӗр укҫа пек. Унта ӑшӑ туйӑм та ҫук пек туйӑнать Нинӑна» [13, 172 с.].

Ҫапла, Миша чунӗнче пӗр чӗптӗм юрату та, хӗрхенӳ те ҫук. Вӑл укҫа чирӗпе чирленӗ. Хӑйӗн пӗртен пӗр тивӗҫӗ – укҫа, нумайрах укҫа тӑвасси тесе шутлать ар ҫын. Ачисене те, хӑйне юратакан арӑмне те хисеплеме пӗлмест. Тем вӑхӑтран вара Нина чӗри те Мишашӑн яланлӑхах хупӑнать. Ар ҫынсене шанми, юратӑва ӗненми пулать хӗрарӑм, анчах инкеке тата тепӗр хут юратса пӑрахать. Хӗрарӑма иккӗмӗш юратӑвӗ те ултавлӑн сутать. «Сергейӑн автобус ҫине ларас умӗн каланӑ сӑмахӗсем ӑна канӑҫ памарӗҫ. «Ар ҫынсен пулать вӑл ун пекки... Эп сана ҫеҫ юрататӑп... Таврӑнсан пӗрлешӗпӗр», – куҫран пӑхса йӑлӑнчӗ вӑл Нинӑна. Мӗнле хӑять вӑл юрату ҫинчен калаҫма? Пӗлет-ши вӑл юрату мӗнне? Юрату вӑл ыталашса савӑшни те, чуп туни ҫеҫ-ши ар ҫынсемшӗн? Чӗрери туйӑмсем ниме те тӑмаҫҫӗ-шим? Кама шанмалла, мӗнле пурӑнмалла кун хыҫҫӑн?» [13, 183 с.] – ҫакӑн пек шухӑшсемпе Атӑл хӗрне ҫитсе тухать хӗрарӑм. Пӳклӗ вилӗмпе вилет Нина, хӑй ҫине хӑй алӑ хурать.

«Вил тӑпри умӗнче тӑракан виҫӗ ар ҫын ҫеҫ таврара мӗн пулса иртнине курмаҫҫӗ те тейӗн: пурте тарӑн


CC BY

шухăша путнă. Кашнин аллинче Нина юратнă роза чечекĕсем, анчах вĕсене пĕри те Нинăн вил тăприйĕ çине хума васкамарĕ. «Упрама пĕлеймерĕм сана, каçар. Ачасене аванах пăхса ÿстерĕп», – пăшăлтатрĕ пĕри. «Сана хам май çавăрма пултарайманшăн хама нихăçан та каçармастăп. Пĕле тăркачах усал çынсенчен упраймарăм сана», – калаçрĕ тепри. «Капла пулса тухасса пĕлнĕ пулсан сана вăйпах хам пата хăварнă пулăттăм. Çавăншăнах вилмеллеччĕ-ши вара?» – шухăшларĕ виççĕмĕшĕ. Нина вара хĕрлĕ çитсăпа карăнтарнă тупăкра хускалмасăр выртрĕ. Унăн çĕр çинче тÿрĕлĕхре те тасалăхра пурăннă чунĕ хăйне чылай хура-шур тÿстернĕ çынсенчен хăвăртрах леш тĕнчене – канлĕхпе лăпкăлăха – туртăнчĕ» [13, 198 с.], – тесе вĕçлет хайлава автор.

Пирĕн шутпа, çыравçă хайлавра юратупа телей пирки шухăшланă май, юрату ыратăвне кăтартнă май пачах урăхла шухăш калать. Чăнах, Нинăн пÿклĕ вилĕмне пачах та тÿрре кăлармасть. Унран та ытларах – сивлет: мĕнле хăйрĕ вăл – хăй те тăлăххăн çитĕннĕ икĕ ача амăшĕ – çапла çăмăллăн пурнăçран уйрăлма? Юратупа пурăнни аван-ха вăл, анчах та хĕрарăм чи малтанах анне-çке! Хăй чун панă ачасене хăй ирĕкĕпе тăлăха хăварчĕ-çке Нина! Çакна вара ар çыннăн темĕнле пÿтсĕрлĕхĕ те тÿрре кăлараяс çук. Çакнашкал туртăм, сăмахсăрах, хĕрарăм тĕнче курăмĕшĕн вăйлăрах.

Чăваш литературинче хĕрарамсен чăн чăвашла тата хĕрарăм кусĕпе калăпланă сăнарĕсене Ю. Силэмĕн хайлавĕсенче курма пулать. Тĕрĕсех ĕнтĕ, унăн хайлавĕсенче хĕрсемпе хĕрарăмсен сăнарĕсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Акă «Хĕрĕхри хĕр» калавăн Прасук сăнарне илер-ха. Ун пирки «мĕскĕнленме юратман», анчах «пĕчченлĕхпе асапланакан» сăнар тесе калама пулать. Чăнласах та, Прасук пĕччен, упăшкасăр. Тепĕр тесен, упăшкаллă пулни пĕчченлĕхрен çăлмасть-çке! Çыравçă çак сăнара малашнехи пурнăç çулне суйлас умĕнхи тапхăрта кăтартнă. Çавăнпа иртнине аса илет Прасук, тунсăхлать тата асапланать, анчах ар çынна вырăна хуманни, пурнăçра хăй кăмăлне мала хурса хуçаланасси çук унра. Ар çыннăн тĕрек хул пуççийĕ çине тайăнса пурнăç çулĕпе утма кашни хĕрарăмах ĕмĕтленет. Çакă Прасук чĕринче те сÿнмен паллах. Пĕрремĕш юратăвĕ Куля унăн (чăваш хĕрĕн) шухăш-кăмăлне тĕрĕс ăнланса илейменни çак ĕмĕте тахçан татнине пăхмасăрах мăшăрлă пуласси пирки шухăша каять Прасук, анчах çак утăма васкаса, çăмăлттайланмасăр, мĕнрен мĕн пулассине туйса тăвасшăн. Çавăнпа та çĕр варринче ыйхине татса аса илÿ авăрне кĕрет. Çакăнпа пĕрлех çыравçă Прасук сăнарĕ урлă кăмăл-сипет тасалăхĕ пирки шухăша кайни те куç кĕретех.

Силэмĕн хĕрарăм сăнарсем чăнласах таса кăмăллă та çирĕп чунлă, çапах та нихăш сăнарне те ар çын хуçи пулса тăрассишĕн çунать тесе айăплама çук. Çак сăнарсене тĕрĕс ăнланас тесен пирĕн паянхи обществăра ар çын хăйĕн обествăри статусне çухатса пынине шута илмелле пулĕ. Тахçан матриархат йĕркине патриархат улăштарнă пек патриархата матриархатпа улăштармалли вăхăт çывхарса пырать пулас. Паллах, çакă, пирĕн шутпа, паян е ыран пулмасть, анчах ар çынсем пуласлăх, чи малтанах пулас ăру – ача-пăчи çинчен манса эрех кĕленчине чăмни, йывăрлăхсенчен пăрăнма хăнăхни те (ывăл ача салтак пулма пăрахнăшăн, паллах, пирĕн хĕрарăмсен, аннесен айăпĕ те пысăк) çĕнĕ ĕмĕре кунран-кун хăвăртрах çывхартать пулĕ.

Иккĕленмелли çук, Ю. Силэм калавĕсенче хĕрарăмăн пĕтĕм вăйне туллин уçса панă, анчах темшĕн хăш-пĕр чух эпир хĕрарăм вăйĕ унăн вăйсăрлăхĕ пулнине манатпăр. Акă, тĕслĕхрен, «Çăхав е хĕл ларнă каç» калавра кăтартнă икĕ сăнара – Ксения Павловнăпа Иринăна танлаштарар-ха. Борис Борисович Толстов çамрăк чух та, халĕ те Ксение пĕтĕм чĕререн юратнине пăхмасăрах (ун шăпийĕ те Прасукăнни евĕр çаврăнса тухрĕ-çке!) Иринăна качча илет. Кирлĕ вăхăтра куççуль ÿкерме пĕлнипе Ирина ар çынна хăйне май çавăрать. Юратса мар, хĕрхенсе качча илет ăна Пурис, анчах темле пулсан та Ирина шăпах мăшăрĕпе ача-пăча ҫуратса ÿстерет-çке! Ксения вара хĕр ĕмĕрне пĕччен, тăр пĕччен ĕмĕрлет.

Шел пулин те, паянхи пурнăçра хĕрарăма вăйсăр пулма нимĕнле май та çук. Çемье тĕрекĕпе ача-пăча пуласлăхĕ, ĕçпе укçа ыйтăвĕ – пурте пĕр харăс йывăр çĕклемпе выртаççĕ унăн черчен хул пуççийĕ çине. Хĕрарăм кăмăл-сипечĕ чăн пурнăçра улшăнса пынăçемĕн унăн литература кăтартакан курăнăвĕ те улшăнать. Хĕрарăмсем харсăрланса çивĕчленеççĕ, ирĕклеççĕ, анчах çаплипех хăйсен телейне, чун канăçлăхне тупаймасăр асапланаççĕ. Шăпах çакнашкал сăнарсене Ю. Силэм хайлавĕсенче курма пулать те ĕнтĕ.

**Пĕтĕмлетÿ**

Çапла вара, тĕпчеве пĕтĕмлетсе çакна каламалла: чăваш литературиче «хĕрарăм прози» текен пулăм пур тесе иккĕленмесĕр калама çук. Çак пулăмăн паллисем хĕрарăм çыравçăсен психологиллĕ, философиллĕ тата лирикăллă стилĕсенче вăйлă палăраççĕ [4; 5]. Çав вăхăтрах кашни çыравçах ар çын е хĕрарăм, ку е леш халăх çынни пулни кĕретех. Çакна шута илсе уйрăм авторăн хайлавĕсенче шăпах чăваш хĕрарăмĕн е чăваш ар çынĕн тĕнче курăмĕ сăнарланнине йышăнмалла. Çавăнпа пĕрлех ар çын çыравçă та хайлавра тĕнче çине хĕрарăм куçĕпе пăхма пултарнине сирсе пăрахмалла мар, мĕншĕн тесен шăпах çакă вăл илемлĕ пултарулăхăн тĕп саккунĕсенчен пĕри пулса тăрать.

***Список литературы***

1. Бердяев Н.А. Философия творчества, культуры и искусства в двух томах. Т.II.: Миросозерцание Достоевского и др. работы / Н.А. Бердяев. – М.: Искусство. – 1994. – 510 с.
2. Гачев Г.Д. Национальные образы мира. Курс лекций / Г.Д. Гачев. – М.: Academia – 1998. – 430 с.
3. Кудрявцева Р.А. Женская личность в художественном пространстве марийского рассказа конца XX века / Р.А. Кудрявцева // Филологические науки. Вопросы теории и практики. – 2015. – №4–1 (46). – С. 91–94.


CC BY

4. Мышкина А.Ф. Образ женщины в литературе / А.Ф. Мышкина // Народные и профессиональные традиция в культуре Чувашии: сб. ст. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2009. – С. 48–58
5. Мышкина А.Ф. Проблемы национальной эстетики и литературного творчества в художественном пространстве начала XXI века / А.Ф. Мышкина, Т.И. Зайцева, Т.Н. Емельянова // Филологические науки. Вопросы теории и практики. – Тамбов: Грамота, 2019. – №2. С. – 364–367.
6. Мышкина А.Ф. Образ современности в рассказе Р. Прокопьевой «Одна тысяча рублей» / А.Ф. Мышкина // Проблемы марийской и сравнительной филологии: сб. статей. – Йошкар-Ола, 2019. – С. 194–196.
7. Никифорова В.В. Хальхи литература идеи-идеалĕ: 2001–2005 çулсенчи проза / В.В. Никифорова // Чăваш халăх историйĕпе культурин çивĕч ыйтăвĕсем: ст. пуххи. Шупашкар, 2011. – С. 204–227.
8. Никифорова В.В. Чувашская женская проза в контексте современной литературы / В.В. Никифорова // Филологические науки. Вопросы теории и практики. – 2020. – Т. 13. – №1. – С. 67–71.
9. Прокопьева Р. Пĕр пин тенкĕ / Р. Прокопьева // Тăван Атăл. – 2017. – №6. – С. 23–31.
10. Родионов В.Г. История чувашской литературы XX века: в 2 ч. Ч.2. 1956–2000 / В.Г. Родионов, А.Ф. Мышкина, А.П. Хузангай [и др.]. – Чебоксары: Чуваш. кн. изд-во, 2017. – 432 с.
11. Силэм Ю. Иккĕн: калавсем / Ю. Силэм. – Шупашкар: Чăваш кĕн. изд-ви, 2001. – 240 с.
12. Современная Нарспиана: итоги и перспективы. Материалы Межрегион. науч.-пр. конф. / ред.-сост. А.Ф. Мышкина. – Чебоксары: Изд-во Чуваш. ун-та, 2008. – 280 с.
13. Элмен У. Ма инçе-ши çăлтăрăм?..Повеçсем, калав / У. Элмен. – Шупашкар. Чăваш кĕн. изд-ви. 2001. – 207 с.

***References:***

1. Berdiaev, N. A. Filosofiia tvorchestva, kul'tury i iskusstva v dvukh tomakh. T.II.: Mirosozertsanie Dostoevskogo i dr. raboty., 510.
2. Gachev, G. D. Natsional'nye obrazy mira. Kurs lektsii., 430.
3. Kudriavtseva, R. A. (2015). Zhenskaia lichnost' v khudozhestvennom prostranstve mariiskogo rasskaza kontsa XX veka. Filologicheskie nauki. Voprosy teorii i praktiki, 4, 91-94.
4. Myshkina, A. F. (2009). Obraz zhenshchiny v literature. Narodnye i professional'nye traditsiia v kul'ture Chuvashii, 48-58. Cheboksary: Izd-vo Chuvash. un-ta.
5. Myshkina, A. F., Zaitseva, T. I., & Emel'ianova, T. N. (2019). Problemy natsional'noi estetiki i literaturnogo tvorchestva v khudozhestvennom prostranstve nachala XXI veka. Filologicheskie nauki. Voprosy teorii i praktiki, 2. Tambov: Gramota.
6. Myshkina, A. F. (2019). Obraz sovremennosti v rasskaze R. Prokop'evoi "Odna tysiacha rublei". Problemy mariiskoi i sravnitel'noi filologii, 194-196. Ioshkar-Ola.
7. Nikiforova, V. V. (2011). Khal'khi literatura idei-ideale: 2001-2005 culsenchi proza. Chavash khalakh istoriiepe kul'turin civech yitavesem, 204-227. Shupashkar.
8. Nikiforova, V. V. (2020). Chuvashskaia zhenskaia proza v kontekste sovremennoi literatury. Filologicheskie nauki. Voprosy teorii i praktiki, T. 13, 1, 67-71.
9. Prokop'eva, R. (2017). Per pin tenke. Tavan Atal, 6, 23-31.
10. Rodionov, V. G., Myshkina, A. F., & Khuzangai, A. P. (2017). Istoriia chuvashskoi literatury XX veka: v 2 ch. Ch.2. 1956-2000., 432. Cheboksary: Chuvash. kn. izd-vo.
11. Silem, Iu. (2001). Ikken: kalavsem., 240. Shupashkar: Chavash ken. izd-vi.
12. Myshkina, A. F. (2008). Sovremennaia Narspiana., 280. Cheboksary: Izd-vo Chuvash. un-ta.
13. Elmen, U. Ma ins'e-shi s'altaram?..Poves'sem, kalav., 207.

***Автор çинчен пĕлтерни***
**Мышкина Альбина Федоровна –** филологи ăслăлăхĕн д-рĕ, ăслăлăх ертўçĕ ĕçтешĕ, доцент, ЧР «Чăваш Республикин вĕренў институчĕ» ХПВ БУ регион аталанăвĕ центрĕ, Шупашкар хули, Раççей Федерацийĕ.

***Информация об авторе***
**Мышкина Альбина Федоровна** – д-р филол. наук, ведущий научный сотрудник, доцент, Центр регионального развития БУ ЧР ДПО «Чувашский республиканский институт образования», Чебоксары, Российская Федерация.

***Information about the author***
**Albina F. Myshkina** – doctor of philological sciences, leading research fellow, associate professor of Centre for Regional Development BI of FVE "Chuvash Republican Institute of Education of the Ministry of Education of Chuvashia", Cheboksary, Russian Federationn.

**Поступила в редакцию / Received / Редакцие çитнĕ** 02.02.2022
**Принята к публикации / Accepted / Пичетлеме йышăннă** 24.02.2022
**Опубликована / Published / Пичетленсе тухнă** 30.03.2022


CC BY